Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

20 (7553) № * Шăмат кун, 2008 çулхи мартăн (пуш) 15-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Хĕл ăсатăвĕн уявĕнчен

## Хавас кăмăл-туйăмпа, ташă-юрăпа

*кĕтсе илчĕç район çыннисем Çуркуннене*



Çуркуннехи пĕрремĕш уяв – Хĕл ăсатăвĕн уявĕ кăçал Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕпе, Мăн çăварнипе пĕр вăхăта килчĕ. Хĕл ăсатăвĕн уявĕсем Муркашра мартăн 8-мĕшĕнче, Мăн Сĕнтĕрте мартăн 9-мĕшĕнче иртрĕç. Çавна май тулли кăмăлтан савăнма, пĕр-пĕрне уявсемпе саламлама, парнесем пама, ташлама-юрлама сăлтавĕсем те, майĕсем те ытларах пулчĕç.

Сăлтавĕсем тенĕрен, Хĕл ăсатăвĕн уявне район центрне пухăннисене уявсемпе саламланă май район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та вĕсене асăнмасăр иртмерĕ. Акă Муркаш районĕ иртнĕ çул итогĕсемпе республикăри экономика ăмăртăвĕнче япăх мар кăтартусем тума пултарнă, ытти районсем хушшинче виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Районĕпе пĕтĕмпе 1 миллиард та 163 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Унăн ытларах пайĕ – промышленность продукцийĕ. Кунта чи малтанах «Сеспель» предприятие, Муркашри кирпĕч завочĕпе сĕт-çу заводне асăнса хăвармалла. **(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**



**Сăн ӳкерчĕксенче: уява пухăннисене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламлать; епле Хĕл ăсатăвĕн уявĕ-ха вăл капăрлатнă лаша кӳлнĕ çунасемсĕр?**

Ыран – Суту-илӳре, йăла службинче тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра ĕçлекенсен кунĕ

**СУТУ-ИЛӲРЕ, ЙĂЛА СЛУЖБИНЧЕ ТАТА ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТ-ЙĔРПЕ КОММУНАЛЛĂ ХУÇАЛĂХРА ĔÇЛЕКЕНСЕМ, АСĂННĂ ОТРАСЛЬСЕН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Сирĕн ĕç районта пурăнакансен пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшать. Кил-çуртра ăшă, çутă, шыв, газ пулни, магазинсенче таварсен ассортименчĕ пуян пулни, йăла ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерни кашни çыннăн кăмăлне çĕклет. Эсир потребительсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме, çынсене тĕрлĕрен пулăшу пама тăрăшатăр. Хăвăрăн тивĕçĕре пысăк яваплăхпа пурнăçлатăр, паянхи кун ыйтнине шута илсе вăй хуратăр. Районăн социаллă-экономика аталанăвĕнче сирĕн çитĕнӳсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те хăвăрăн ĕçе пахалăхлă пурнăçласса шанса тăратăп. Малалла та, йывăрлăхсене çĕнтерсе, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тумалла пултăр. Пурсăра та çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, ăнăçу, телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**



*А.В. Белков столяр-платникпа В.Г. Веселов электрогазосварщик – «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх» предприяти ĕçченĕсем. Вĕсем кунта нумай çул вăй хураççĕ. Шаннă ĕçе яланах яваплăха туйса пурнăçлаççĕ. Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.*

Раççейре

### *Милиционерсен ĕç укçи ӳсет*

Кĕçнерни кун РФ Шалти ĕçсен министерствин финанспа экономика департаменчĕн ертӳçин çумĕ Н. Максименко генерал-майор çулталăк вĕçлениччен милиционерсен ĕç укçи 18,8 процент ӳсессине пĕлтернĕ. Вăл палăртнă тăрăх, юлашки пилĕк çулта вĕсен ĕç укçине тăваттăмĕш хут ӳстереççĕ.

Çитес виçĕ çулта окладсем тата икĕ хутчен пысăкланмалла. 2009 çулта – 7 процент, 2010 çулта – 6,5 процент. 2001 çултан улшăннă компенсацисене те малашне индексацилесе пыраççĕ.

Пенсионерсен (вĕсем пĕтĕмпе 690 пин çын) пенсийĕсем те штатри ĕçченсен оклачĕсене кура ӳсеççĕ.

Республикăра

### *Пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕ – район çыннисене*



«Сывлăх» наци проекчĕ çӳллĕ шайри медицина технологийĕсене аталантарассине мала хурать.

Н.В. Федоров ЧР Патшалăх Канашне янă «Малашлăха паян тăватпăр!» Çырăвĕнчен: «Травматологи, ортопеди, тата эндопротезировани федераллă центрĕ республикăри хальхи çĕнĕ йышши технологисен хăйне май локомотивĕ пулса тăрать. Çак тĕлĕнтермĕш чаплă центра уçни, ăна хальхи тĕнче стандартне ларакан медицина хатĕрĕсемпе тивĕçтерни наукăри хамăрăн тата тĕнчери çитĕнӳсене пĕтĕçтерме май парать... Ортопеди профиллĕ операцисен хисепĕ тăвата хут ӳсет. Çĕнĕ технологиллĕ медицина пулăшăвĕ илесси 80 процент пысăкланать. Травмăсене пула çынсем инвалида тухасси палăрмаллах чакать. Çакăн чухлĕ инвестици хывни, малта пыракан медицина технологийĕсене системăлла вăя кĕртни халиччен пирĕн республикăра пулман».

Çак пулăшупа район çыннисем те усă кураççĕ. Ятарлă ĕç ушкăнĕ туса хунă. Март уйăхĕнчен пуçласа вăл вырăнсене тухать, операцисем тума пациентсене суйласа илет.

Консультацие çырăнас текенсен район центрĕнчи сывлăх учрежденине пымалла.

### *Кĕрхи культурăсем лайăх хĕл каçнă*

Ытлари кун Чăваш Ен премьер-министрĕ Сергей Гапликов республика правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев планеркăна хутшăннисене çур аки ĕçĕсене мĕнле хатĕрленни çинчен каласа панă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, кăçал республикăна 40 процент ытларах минераллă удобренисем кӳнĕ, кĕрхи культурăсем йĕркеллĕ хĕл каçнă.

**ЧР ПА пресс-службы.**

Кун пекки те пулать иккен

## Айтăр-ха кивĕ хут пухар! Е... пухар мар-и?

Çуллен хаçат-журнал çырăнса илмесĕр пурăнмастпăр. Пĕлтĕр-виçĕм çулхи кивĕ хаçат-журнал, юрăхсăра тухнă кĕнеке тавраш кирлех мар. Унсăр пуçне ытти ăпăр-тапăр кивĕ хут тавраш те килти хуçалăхра пухăнсах пырать. Усăсăр мĕн ăна çунтарса пĕтерсе сая ярас е кăларса тăкас?

Кун пек усăсăр кивĕ хут таврашне пухса михĕне тултартăм та Муркаш райповĕн хатĕрлев кантурне çул тытрăм. Ара, çитменнине пысăк укçах мар пулин те, кивĕ хута леçсе парса кăштах та пулин укçа та тума пулать вĕт-ха.

Утни кăлăхах пулчĕ. Ара, укçа чиксе кайма ăша тытман. Кивĕ хут сдавать тума укçа тӳлемелле иккен! Пулаймарĕ маткасси кивĕ хут сдавать тăвасси.

Тĕлĕнетĕп: малтанхи вăхăтра шкул ачисем те кивĕ хут таврашне килĕрен пуçтаратчĕç, пухса хатĕрлев кантурне леçсе «ĕçлесе илетчĕç». Халĕ вара? Кам-ха хăй укçа тӳлесех кивĕ хут пухса леçĕ? Çунтарса ямасан ирĕксĕрех çӳп-çап тăкмалли вырăна кайса пăрахма тивет. Вăл вара çилпе таврана саланать. Ăçтан-ха пирĕн урамсем таса та тирпейлĕ пулĕç кун пек чухне?

Кивĕ хут таврашне хатĕрлев кантурне леçсе панăшăн укçа тӳлемеллине илтсен çăвар карса пăрахнине кура хатĕрлевçĕ лăплантарма васкарĕ: «Ан шутлăр темскер, ку укçа вăл пирĕн валли мар. Кивĕ хута утилизацилеме халĕ укçа тӳлеме тивет. Хамăр кĕсьерен тӳлейместпĕр вĕт-ха».

Вăт япала. Ку михĕне халĕ манăн вара каялла киле çити терт курса сĕтĕрме тивет-им? Миххи качкиех çырмана вăркăнтарса хăвартăм.

Ку истори çакăнпа вĕçленчĕ темеллеччĕ ĕнтĕ. Пĕррехинче Муркаш пасарĕнче Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан пĕлĕшĕме тĕл пултăм. Каласкаласа кайрăмăр. Хампа пулса иртнĕ историе каласа патăм. «Пулма пултараймасть,– тет юлташăм. Пирĕн патра кивĕ хута укçа тӳлеттерсе йышăнмаççĕ вĕт-ха. Пачах тепĕр май, хăйсем уншăн тӳлеççĕ».

Ак тамаша, кама ĕненмелле халь кунта? Шӳтлет пулĕ терĕм юлташăм. Мăн Сĕнтĕрпе Муркаш райповĕсем икĕ патшалăхра мар вĕт-ха. Саккунĕсем епле расна? Ĕненменнипех Мăн Сĕнтĕр райповне шăнкăравласа пăхма шут тытрăм. Шӳтлемест иккен юлташăм. «Хăть мĕн чухлĕ тиесе килĕр. Килограмне 60 пуспа йышăнатпăр»,– пĕлтерчĕ телефон трубкинчи йăваш сасă. Пуç тавра вара тĕрлĕ шухăш явăнать. Апла пулсан шел Мăн Сĕнтĕр райповне. Кивĕ хута çитменнине килограмне 60 пус тӳлесе йышăнас пулать, кайран вара ăна утилизацилеме мĕн чухлĕ тӳлемелле... Сахал мар тăкак тӳсеççĕ пулас Мăнсĕнтĕрсем кивĕ хут пухса.

Тен тата ĕçĕ-пуçĕ урăххинче мар-и? Тен Муркашсем хăйсемшĕн меллĕрех мел шутласа тупман-ши? Пĕрре кивĕ хут пухса укçа ту, кайран ăна Шупашкарти хатĕрлев организацийĕсене леçсе парса укçаллă пул.

Çапла, хальхи вăхăтра темĕн те кĕтме пулать, темĕн те илтме-курма тивет иккен. Тĕлĕнме те пăрахатпăр пулас майĕпен вĕсенчен. Тен ку çапла пулмалла пулĕ те.

**В. БУМАЖКИН.**

Йыхрав

### *Паян тата ыран – пысăк спорт ăмăртăвĕсем*

Районти йĕлтĕр спортне кăмăллакансене паян тата ыран пысăк спорт ăмăртăвĕсем кĕтеççĕ. Шăмат кунпа вырсарни кун районти йĕлтĕр базинче йĕлтĕрпе чупса ял хуçалăх предприятийĕсенчи, организацисенчи, учрежденисенчи физкультура коллективĕсем, ял тăрăхĕсемпе район администрацийĕсен пайĕсем, учительсен коллективĕсем хушшинче мала тухса район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн тата шкул ачисемпе ĕç çыннисен спартакиадин ăмăртăвĕсем иртеççĕ.

Мартăн 15-мĕшĕнче малтанах шкул ачисемпе ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе йĕлтĕрпе чупассипе ăмăртусем пулаççĕ. Хыççăн район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн эстафета ăмăртăвĕсем пулĕç. Тепĕр кунне вара Спартакиада шучĕпе эстафета ăмăртăвĕсене ирттерме палăртнă.

Ку ăмăртусене кăçал ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен В. Егорова ячĕпе хисепленекен спорт шкулне йĕркеленĕренпе 35 çул çитнине халалланă.

Юбилей

## Саламлатпăр



Нумай çул пĕрле ĕçленĕ юлташăмăра – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Нина Александровна БОРИСОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа хисеплесе ăшшăн саламлатпăр. Паянхи вашаватлăхпа хастарлăх сирте нихăçан та ан чактăр, ырă кăмăлăр малашне те упрантăр, çавăн пекех çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал, кулленхи ăнăçу сунатпăр.

**Редакци коллективĕ.**



Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Мария Федоровна ЕГОРОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пире ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн сан умра пуç таятпăр. Эс пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Татах нумай çул пурăнма сана Турри ырлăх-сывлăх патăрччĕ.

**Салампа: 4 хĕрĕ, ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, кинĕ, мăнукĕсем.**



Анаткасра пурăнакан **Владислав Виссарионович КУЗНЕЦОВА** 50 çул тултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, иксĕлми вăй-хăват, тумхахсăр кун-çул, çирĕп сывлăх, пысăк телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хуньамăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ, Кузнецовсемпе Гордеевсен çемйисем, тăванĕсем.**